# Э. Юрьев гербĕ

Э. М. Юрьев — Чăваш Патшалăх символĕсен — ялавĕпе гербĕн, Шупашкар хулин гербĕн авторĕ. Чăваш культурине тĕнче шайне çĕклессишĕн хăйĕн ăс-тăнне те, вăй-халне те, пултарулăхне те пачах шеллемен. Вăлах живописец, график, геральдист, вексиллограф, прикладник, дизайнер, плакатист, рисовальщик, скульптор, медальер, иллюстратор, шрифтовик, фотографик... — пур енлĕ талантлă çын. Чăвашра çеç мар, тĕнчере ят-сум, чыс-хисеп çĕнсе илме пултарнăскер. Çавсене шута илнĕ те ĕнтĕ хаклă çыннăмăрăн вĕренекенĕ В. Шипунов ÿнерçĕ-геральдист. Вăл Сĕнтĕрвăрринче ĕçлесе пурăнать. Э. Юрьев ячĕллĕ музей-галерейăпа тачă çыхăнура.

В. Шипунов хăйĕн вĕрентекенне — Э. М. Юрьева асăнса пурăнас тĕллевпе, ун ячĕпе ятарласа герб ăсталанă.

Герб çинче геральдика щичĕ, унăн сенкер кăвак уйĕнче кĕмĕл тĕслĕ, пачах тепĕр майлă çавăрса лартнă икĕ юплĕ сенĕк евĕр хĕрес. Ун айĕнче ылтăн гамеида (пусма картлашки). Вăл Э. Юрьевăн ÿнер искусствинчи творчестви ÿссе пынине кăтартать. Сенкер кăвак тĕсе те ахальтен çеç усă курман. Вăл аслă çыннăмăрăн ачаранпа ĕмĕтленнĕ ĕмĕчĕ — летчик пуласси, тĕнче уçлăхĕнче самолетпа вĕçесси. Анчах та куç тĕлĕшĕнчен ыйтнине тивĕçтерейменнине пула ĕмĕтленнине пурнăçа кĕртеймен. Ирĕксĕрех ÿнер искусствинче хăйĕн ăсталăхне туптама тивнĕ.

Сенĕк евĕрлĕ кĕмĕл хĕрес — Польша геральдикипе тачă çыхăннă тени те йăнăш пулмĕ. Элли Михайловичăн ват кукамăшĕ — поляк хĕрĕ, дворянка, революционерка пулнă. Польша пĕр вăхăт Вырăс патшалăх тытăмне кĕнĕ. Пултаруллă, ирĕклĕхшĕн кĕрешекен революционеркăна влаçрисем арестленĕ те Çĕпĕре ăсатнă.

— Ват кукамай кăкăр ачипе, Янпа (1868 ç. ç.), Пшонкă тăрăхне çитнĕ. Арестантсен çулĕ — Хурăнлă çул (Кăрмăш— Çĕрпӳ — Хусан-Çĕпĕр çĕрĕ) шăпах хальхи "Нива" ЯХПК территоринчи Çÿремет вăрманĕ çумĕпе иртнĕ. Чĕчĕ ачине Çĕпĕре çитереес çук тесе, уйра тырă выракан Пшонкă çыннине, Куçмана, парса хăварнă. Поляк хĕрарăмĕн ачи, пĕчĕк Ян, каярахпа Иван ятпа хут çине çырăннă. Иван Кузьмичăн мăнукĕ эпĕ — Элли, аннем манăн — Евдокия Ивановна. Çапла вара манра чăваш юнĕ анчах мар, поляк юнĕ те чупать, — мăнаçланса каласа паратчĕ Чăваш халăх художникĕ.

Геральдика щичĕ çинче — шлем. Çар çыннин тумĕ. Ку вара Трак тăрăхĕпе çыхăннă. Упи паттăрăн кĕмĕл шлемĕ.

Шлем ăшĕнчен çунатлă кĕмĕл Кашкăр — гербăн символĕ тĕнчене сăнама, çынсене, выльăх-чĕрлĕхе — пурне те сыхлама, хÿтĕлеме ту... ларнăн туйăнать. Ларни ... мар, тĕнче уçлăхĕнче вĕ... çÿресе пурне те курма... пăхмалла, сăнамалла — ... çĕрте те йĕрке тума... Чăваш халапĕнче те уна... сăнарпа паллашма пулать... вăл — кашкăрсен турри. ... хампар. Маларах калан... тÿр килет. Вăл та шурă ... Вăл та хÿтĕлевçĕ.



Гербăн икĕ енĕпе тĕ... уçлăхĕн сенкер тÿпийĕн ... сем, аял енчине ылтăн ... вырăн йышăннă.

Çутă сарă тĕс вăл — Хĕве... çуттин тĕсĕ. Хĕвел вара ... çинче мĕн пуррине пĕтĕм... пурнăç парнелет. Чăва... халăхĕ сарă тĕсе мĕн ĕлĕкре... мĕн пур тĕссенчен чи ... тесе шутланă. Геральдика... ылтăн пуянлăха, тĕрĕслĕ... ыр кăмăллăха, хĕрхенӳ... çирĕплĕхе, вăй-хала, шан... клăха ăнлантарать. Кĕм... тĕрĕслĕхе, тасалăха, шан... клăха палăртать. Кăва... лăпкăлăха.

Вадим Шипунов ÿнерçĕ-ге... ральдистăн ĕçĕ Парижа çит... Пĕтĕм тĕнчери Геральди... академийĕнче ăна пысăк ха... панă. Халăх патне кăларм... юрăхлине палăртнă.